

# Çилçунат

№3 пуш, 2002

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ



Николай Аверкиевич Исмуков поэт 1942 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче Патăръел районĕнчи Первомайски ялĕнче çуралнă.

Свердловскра А. М. Горький ячĕллĕ университет пĕтернĕ. Пĕр вахат шкулта, техникумра, институтра ĕçленĕ хыççăн Мускаври В. И. Ленин ячĕллĕ педагогика институтĕнче аспирантурăра, Мускаври патшалăх педагогика университетĕнче докторантурăра вĕреннĕ.

Философи наукисен докторĕ Н. А. Исмуков профессор Шупашкар коопераци институтĕнче ĕçлет. Вăл философи кафедрин пуçлăхĕ, декан.

Наукăра Николай Аверкиевич философи категорийĕ, наци культури, нацилле философи, синергетизм ыйтăвĕсене тĕпчесе 4 кĕнеке, 120 статьяна яхăн пичетлесе кăларнă.

Николай Исмуков 1985 çултанпа СССР (халĕ РФ) писателĕсен Союзĕн членĕ, 10 кĕнеке авторĕ. Ун сăввисене вырăсла, тутарла, пушкăртла, марилле, украинла, итали тата француз чĕлхисене куçарнă. «Митта» поэмăпа «Ахарсамана» сăвăлла романшăн вăл Митта Ваçлейĕн премине тивĕçнĕ.

Н. А. Исмуков РСФСР тата СССР писателĕсен 9-мĕш съезчĕсен делегачĕ пулнă. Вăл Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ. Поэтăн «Тăван кĕтес», «Çĕр юрри», «Касăя», «Ахарсамана», «Тăватйĕркен», «Суйласа илнĕ сăввăмсем», «Тĕнче ытамĕнче» кĕнекисене вулакансем ăнпăн йышăнчĕç, критиксем пысăк хак паччĕç.

Хальхи вăхăтра поэт «Атилла вилĕмĕ е Юлашки юрату» сăвăлла трагедине вĕçлесе пырать.

Ачалăх — пурнăçăн пĕр пайĕ. Вăл чи хитри те. Çăвăнна та çитĕннисем валли сыракан кашни писателĕн ачалăха асăнмасăр иртеймест. Николай Исмуков вара ятарласах нĕчĕк тусĕсене те сăвăсем нарнелет. Хайĕн асла ентешĕ Митта Ваçлейĕн халалне, ача-пăча валли çырсан та ачапчалла çырмалла мар, тенине яланах ăша хывать. Ака, «Касăя» ятла кĕнекинех илер-ха. Унти поэма çитĕннĕ сынрап пуçланать:

Эс манран мĕскер ыйтасшăн,
Мĕн каласшăн, кăсăя?
Шак шаккатан, ачапча пек,
Пирĕн сăрла кусуя...

Çак касăя чуречерен хĕлле пырса шаккани пĕррехинче çил-тăманла сивĕ кунхине пĕр ыйткалакан ача вĕсем патне мĕнле пырса тухнине ăна аса илтерет. Сюжечĕ çивĕч, синкерлĕ. Çанах та ыра кăмăллăх вилĕмсĕррине туятпăр.

Ачалăх пурнăçăн пĕрремĕш иайĕ пулсан, çамрăклăх — тепĕр илĕртуллĕ тапхăр. Николай Исмуков çак вăхăта халаллана хитре сăвăсемпе вулакана чылай савантарчĕ. Çамраклăх, юрату... Вĕсем пĕр пĕлтерĕшлĕ самахсем пек туйанаççĕ. Николай Исмукован сăввисенче тĕнчери чи çепĕç те вĕри туйăм чунчĕрене çупарлать. Мĕнле майпа? Унан поэзинче эпир «юратап е юрататăп...» йĕркесене тел пулмастпарçке. Çака поэтăн талантне пĕлтерет те ĕнтĕ, çав туйăма темĕнле асамлăхпа уçса пама чун хавалĕ те, пултарулăхĕ те çителĕклĕ унăн.

Савăç хайлавĕсем çутçанталăкпа тачă çыханнă. Ўкерчĕксем вара яланах хайне евĕрлĕ, сăнарла.

Николай Исмуков поэт сес мар — философ та. Поэзийĕнче те çака сисĕнет. Çапах та вăл ытларах — поэт-лирик. Çакна нумай тĕслĕхпе çирĕплетме пулать. Тĕслĕхшĕн унăн шкул çулĕнчех çырнă сăввисен пĕршер çаврăмне çеç илсе пăхар-ха:

Сара кунан чапĕ —
Сар хĕвел ансан,
Хутланса, ача пек,
Тĕлĕрет тюльпан.
(Хĕвел ансан).

Хирте кивелнĕ хамал
Çилпе тем пуплешет.
Асаилуллĕ кăмал
Хăма та килĕшет.
(Кĕрхи илем).

Паллах, поэт çав йĕркесене çырнăранпа вăхăт чылай иртрĕ, вăл çĕнĕ хайлавсем те илсе килчĕ. Çĕнĕрен те çĕнĕ санарсем, ўкерчĕксем вулакана вăйларах та вăйларах илĕртеççĕ.

Сăва та, проза та çыракан писателĕсем чылай-ха. Николай Исмукова эпĕ яланах поэт-лирик тесе шутлатăм. Эпир унпа иксĕмĕр ачасем валли çыракансен семинарĕн поэзи секцине ертсе пыраттăмăр. Кĕтмен çĕртен вăл мана пĕр калав вулагарчĕ. Кам çырнине каламарĕ пулин те, авторĕ камне турех чухласа илтĕм. Поэзийĕнчи нытарса та пытарма çук хайне евĕрлĕхĕ çак калавра та сисĕнчĕ.

Василий КЕРВЕН.